Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

105 (7530) № ✻ Юн кун, 2007 çулхи декабрĕн (раштав) 12-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Мартăн 2-мĕшĕнче – РФ Президенчĕн суйлавĕ

## Пĕрлехи кандидат – Дмитрий Медведев

**Тунти кун “Единая Россия”, “Справедливая Россия”, “Гражданская Сила” тата Аграрлă парти Раççей Федерацийĕн Президентне суйлама правительствăн пĕрремĕш вице-премьерне Д.А. Медведева кандидата тăратассине пĕлтерне.**

**Пулас кандидат ятне “Единая Россия” партин декабрĕн 17-мĕшĕнче иртекен съездĕнче пĕлтерессе кĕтнĕччĕ. Анчах ку ĕç пĕр эрне маларах пулса иртрĕ.**

**РФ Президенчĕ В.В. Путин тунти кун асăннă парти ертӳçисемпе тĕл пулнă чухне Д.А. Медведева вун çичĕ çул ытла пĕлнине тата унăн кандидатурине ырланине палăртнă.**

**Çапла вара РФ Президентне суйлама тăратакан тĕп кандидат паллă. Вăл – Д.А. Медведев. Ăна тӳрех тăватă парти сĕнни те уйрăмах пĕлтерĕшлĕ.**

**Д.А. Медведев кандидатурине Вырăс православи чиркĕвĕ те ырланă. «Вырăс православи чиркĕвĕ РФ пĕрремĕш вице-премьерне Дмитрий Медведева Раççей Президентне суйлама тăратнине ырлать, Мускав тата Пĕтĕм Руç патриархĕ вара кун пирки çывăх вăхăтрах пĕлтерĕ», - тенĕ Мускав Патриархийĕн пресс-службин пуçлăхĕ В. Вигилянский священник.**

**Д.А. Медведев Питĕр хулинчен, 42 çулта, юрист. Акăлчанла аван пĕлет. Влаç органĕсенче чылай çул. РФ Президент Администрацине ертсе пынă. 2003 çулхи Президент суйлавĕнче В.В. Путин кандидатăн штаб ертӳçи пулнă. Юлашки çулсенче правительствăра наци проекчĕсене пурнăçа кĕртессипе ĕçлет.**

**Д.А. Медведев пирĕн республикăпа тачă çыхăну тытать. Кунта пулса иртекен ырă улшăнусене вăл пĕрре кăна мар ырласа калаçнă.**



Ыйту-хурав

## Урамра çутă пулать

**Эпир, Уйкас Янасал ялĕнче пурăнакансем, пĕр виçĕ çул урамра çутă кураймастпăр. Пирĕн Апаш ялĕнче ытларах ватă çынсем пурăнаççĕ. Тепĕр чух çĕрле те унта-кунта тухса кĕмелле пулать. Уйрăмах кĕркунне çĕрле питĕ тĕттĕм. Çавăнпа та ял урамĕнче пĕр çутă та пулин кирлех.**

**Пирĕн колхоз электрикĕсем урамра çутă çутмалли фазăри пралукне татса те “цветмет” турĕç, нимĕн те палли çук. Халĕ вĕсенчен ыйтсан пĕр хурав “Эпир пĕлместпĕр”. Çавăнпа та Апаш ялĕнче пурăнакансем редакци пулăшасса шанаççĕ.**

**Ял халăхĕ ыйтнипе Иван СОЛОВЬЕВ.**

Вулакан çырăвĕпе Уйкас Янасал ял тăрăхĕн пуçлăхне Виктор Иванович Егорова паллаштартăмăр. Акă унăн хуравĕ:

**– Çырура тĕрĕсех çырнă. Кашни ялта, кашни урамра электричество çути çакасси – пирĕн тĕллевсенчен пĕри. Уйкас Апашра электричество счетчикĕсем пулманран кунти çутăна вăхăтлăха татма тиврĕ. Иртнĕ кĕркунне счетчиксемпе çутă ламписем туянтăмăр. Пĕр урамра хĕллехи каçсенче çутă çунать те ĕнтĕ. И. Соловьевсен урамĕнче çутăсене пăхса тăма электрик çук пирки çак оборудование вăхăтра вырнаçтараймарăмăр. Ку урамра çырма урлă каçакан лини çинчи çутă памалли 5-мĕш пралук çук пирки кунта çутă пулман. Ăна хăçан тата кам татни паллă мар. Çавăнпа та халĕ И. Соловьевсен урамне уйрăм счетчик вырнаçтарса паратпăр. Ку ĕç пуçăннă ĕнтĕ. Вăл паян-ыран пурнăçланмалла.**

Республикăра

## Муниципалитет пĕрлешĕвĕсен съезчĕн пĕлтерĕшĕ пысăк

Тунти кун Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров республика правительствин членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.

Çак эрне вĕçĕнче Чăваш Республикин муниципалитет пĕрлешĕвĕсен канашĕн иккĕмĕш съезчĕ иртет. Николай Федоров палăртнă тăрăх, вăл – пысăк пĕлтерĕшлĕ мероприяти, унта республика аталанăвĕн çивĕч ыйтăвĕсене сӳтсе явĕç. Форум ĕçне мĕн пур муниципалитет пĕрлешĕвĕн пуçлăхĕсем, çавăн пекех Министрсен Кабинечĕн членĕсем хутшăнĕç, вĕсене Президент конструктивлă калаçăва хастар хутшăнма сĕннĕ.

“Советская Чувашия” хаçатри пĕр публикаци хыççăн Николай Федоров Президент Администрацине, Хула строительствин тата общество инфратытăмĕн аталанăвĕн министерствине тата Шупашкар хула администрацине республикăн тĕп хулинчи тĕрлĕ организацин ĕç кунĕн пуçламăшĕпе çыхăннă вăхăт тĕлĕшпе тӳрлетӳсем кĕртмелли майсене тишкерме хушнă. Республика пуçлăхĕ палăртнă тăрăх, çакă общество транспорчĕ çине лекекен тиеве шайлашуллăрах тума, çулсем çинчи “пăкăсене” чакарма кирлĕ. Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министрĕ Наталья Володина Пĕтĕм тĕнчери М.Д. Михайлов ячĕллĕ черетлĕ опера фестивалĕ ăнăçлă иртни, унта 4 пин ытла çын пырса курни çинчен пĕлтернĕ.

Планеркăра çавăн пекех кăçалхи бюджета пурнăçлассипе, республика федерацин пурăнмалли çуртсене тата инженери сечĕсене çĕнетмелли проектне хутшăнассипе çыхăннă ыйтусене, ытти ыйтăва пăхса тухнă.

**ЧР ПА пресс-служби.**

Паян – Раççей Конституцийĕн кунĕ

**ХАКЛĂ ЕНТЕШСЕМ!**

Сире чĕререн Раççей Федерацийĕн Конституцийĕн кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Конституци - çĕршывăн тĕп саккунĕ, эпир унăн никĕсĕ çинче хамăр пурнăçа йĕркелетпĕр, хамăр малашлăха тăватпăр. Саккуна хисеплесси – Раççейри кашни гражданинăн тӳрĕ тивĕçĕ. Саккунсене пăхăнни кăна çĕршывра тăнăç тата демократилле вăйлă общество туса хума май парĕ. Кун пек обществăра пурте тулли пурнăçпа пурăнĕç: çамрăксем те, аслисем те, ачасем те.

Ентешсене пурне те тулли кăмăлтан телейпе сывлăх, мирлĕ тӳпе, çемьере лăпкăлăхпа пĕр-пĕрин хушшинче ăнлану, ĕçре хисеп тата ăнăçу сунатăп.

Раççей тулăх пурнăç çулĕпе утни пирĕн кашни киле ырăлăх илсе килтĕр!

**Сире хисеплесе РФ Патшалăх Думин депутачĕ Павел СЕМЕНОВ.**

Тав сăмахĕ

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!**

Декабрĕн 2-мĕшĕнче РФ Патшалăх Думин пиллĕкмĕш созывĕн депутачĕсен суйлавĕ иртрĕ. Пирĕн районти суйлавçăсен списокне кĕртнĕ суйлавçăсенчен çурри ытла - пĕтĕм суйлавçăсен йышĕн 82,07 проценчĕ чухлĕ суйлава хутшăнчĕ, хăй килĕштернĕ партишĕн сасăларĕ. Çакă вăл участоксенчи суйлав комиссийĕсем, ял тăрăхĕсен администрацийĕсем, ялсенчи активсем халăхпа тачă çыхăнса ĕçленине çирĕплетет, районта пурăнакансем общество пурнăçĕнче хастар пулнине кăтартса парать. Сирĕн çак утăмăрта эсир тăван район, республика, çĕршыв пуласлăхĕшĕн çунса тăни, хамăр пурнăçа лайăхлатассишĕн тăрăшни яр уççăн курăнать. Тавах сире çакăншăн.

Патшалăх хăйĕн çыннисемпе пуян. Суйлав пĕтĕмлетĕвĕ вара, хаклă суйлавçăсем, эсир паянхи лару-тăрăва ăнланса тĕрĕс утăм тунине, татăклă самантра тивĕçлĕ йышăну тума пултарнине кăтартса пачĕ. Малашне те пĕр-пĕрне ăнланса, хамăр пурнăç хамăртанах килнине ăша хывса вăй хурасса шанатăп. Пурне те çирĕп сывлăх, ĕçре ăнăçу, çемьере килĕшӳ сунатăп.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

Раççейре

## Спорт çинчен ятарлă саккун

Çитес çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен çĕршывра “О физической культуре и спорте” саккун вăя кĕрет.

- Çĕнĕ саккун йышăнни пĕлтерĕшлĕ пулăм,- палăртнă Росспорт ертӳçи Вячеслав Фетисов.– Вăл спорт отраслĕ çине çĕнĕлле пăхма май парать. Ăна патшалăх политикин пĕр пайĕ тесе йышăнать. Эпир çитес вăхăтра спорта пачах çĕнĕ шая хăпартма пултарăпăр.

Сакăр çул каялла йышăннă саккун паянхи куна тивĕçтермен. Çĕнĕ саккунра патшалăх тата обществăлла структурăсен тивĕçĕсене уйăрнă, регионсенчи организацисен пĕлтерĕшне палăртнă.

Саккунра спорт тĕсĕсен, спорт клубĕсен реестрне çырса кăтартнă. Спортсмен, спортсмен-профессионал, тренер ăнланусене те уçса панă.

Сăмах – район администрацийĕн ĕçченне

## Пур çĕр пайĕсене çухатас марччĕ

***Хресчен ĕмĕрĕпех çĕр çинче ĕçленĕ, çĕр ĕçĕпе пурăннă. Историренех илер-ха, Раççейре ят çĕрĕсем пур çемьесем выçă ларман. Вăрçă-харçи те сахал тухнă-и çĕршĕн? Чăвашра та сенĕк-кĕреçе йăтса тухнă пăлхавсем пулман мар вĕт.***

***Паян вара лару-тăру пачах тепĕр майлă. РФ тата Чăваш Республикин “Об обороте земель сельскохозяйственного назначения” саккунсемпе тата РФ Гражданла кодексĕпе килĕшӳллĕн патшалăх хресчене çĕр пайĕсене харпăрлăха куçарма ирĕк пачĕ, ял çынни вара çак правăпа усă курма васкамасть. 1996 çулхи октябрĕн 18-мĕшĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕн 201-мĕш номерлĕ йышăнăвĕ тухрĕ. Унпа килĕшӳллĕн районти ял хуçалăх предприятийĕсен çĕрĕсен пайĕсене илме право пур граждансен списокне çирĕплетнĕ. Пĕтĕмпе 15 пин çын ытла унта. Паянхи куна илсен мĕнле пырать çак ĕç? Çакăн çинчен каласа пама ыйтрăм эпĕ район администрацийĕн пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен пайĕн ертӳçинчен А.В. ПЕТРОВРАН.***

**– Чи малтанах çĕр пайне мĕнле йĕркепе палăртни çинче чарăнни вырăнлă пулĕ.**

– Çĕр пайĕ пуррине ял хуçалăх продукчĕсем туса илме çĕре тӳлевсĕр майпа приватизацилеме ирĕк паракан документ çирĕплетсе парать. Çĕр пайĕ мĕн калăпăшлă пулнине ял хуçалăх кооперативĕн членĕсен пĕрлехи йышăнăвĕнче палăртаççĕ. Çавăн пекех унта çĕр пайне памалли черете тата çав пай ăçтарах вырнаçнине те палăртаççĕ. Çĕр пайне илекенсен списокне пĕрлехи пухура çирĕплетнĕ хыççăн “Роснедвижимость” управленине тăратмалла, ун хыççăн - регистраци палатине. Регистраци палатинче пай хуçисен списокне регистрациленĕ хыççăн вара тин граждансем, саккунпа пăхнă процедурăсем витĕр тухса, хăйсен пай çĕрĕсене харпăрлăха куçарса регистрацилеме пултараççĕ.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

Камăн сăвăм пысăкрах

***Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче декабрĕн 11-мĕшĕнче кашни ĕне пуçне вăтамран сĕт мĕн чухлĕ сунине кăтартни (килогрампа). Колонкăсенче: 1. Кăçал сунă. 2. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан (“+” – нумайрах, “–” – сахалрах).***

| № | Хуçалăхсем | Пĕр ĕнерен суса илнĕ | (+, – ),кг |
|---|---|---|---|
| 1 | Е.А. Андреев яч.хис. | 6,3 | 0,4 |
| 2 | «Волга» | 5,0 | -5,4 |
| 3 | «Восток» | 11,5 | 1,4 |
| 4 | «Герой» | 9,6 | 0,0 |
| 5 | К. Иванов яч.хис. | 3,5 | -0,5 |
| 6 | Ильич яч.хис. | 10,6 | 1,4 |
| 7 | Ленин яч.хис. | 6,0 | -1,5 |
| 8 | «Лидер» АФ | 10,0 | 1,1 |
| 9 | «Оринино» | 13,3 | 0,0 |
| 10 | «Передовик» | 4,5 | -1,0 |
| 11 | «Свобода» | 9,9 | -1,1 |
| 12 | «Сеятель» | 6,0 | 0,4 |
| 13 | Суворов яч.хис. | 10,5 | 0,0 |
| 14 | «Рассвет» АФ | 3,0 | -0,3 |
| 15 | «Ударник» | 10,5 | 0,0 |
| 16 | Чапаев яч.хис. | 2,0 | -2,8 |
| 17 | «Чемеево» | 2,0 | -4,8 |
| 18 | Чкалов яч.хис. | 10,6 | -0,7 |
| 19 | «Хлебороб» АФ | 3,8 | -0,3 |
| Районĕпе | | 8,3 | -0,2 |

Юбилей

### *Саламлатпăр*



Орининти вăтам шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен хисеплĕ ĕçтешĕмĕре, кăмăллă юлташăмăра, йывăрлăхра ялан алă тăсса паракан тусăмăра, таса чунлă вĕрентекене – **Лайма Владимировна ГОРШКОВАНА** сумлă юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Ĕненетпĕр, эсĕ хăвăн пурнăçна халăха хутла вĕрентес, тăван чĕлхене çĕнĕ аталану шайне çĕклес пархатарлă ĕçе халалларăн. Тăван чĕлхене пĕлмесен ытти чĕлхене алла илеймĕн, тĕрлĕ предметсен никĕсне пуçа хывваймăн. Çак тĕрĕслĕхе сирĕнтен чуна илнĕ ачасем ӳссе çĕршыва кирлĕ çынсем пулса тăчĕç. Вĕсен ӳсĕмĕсемпе эпир паян пурте пĕрле мăнаçланма, савăнма пултаратпăр.

Лайма Владимировна! Хăвăр пуçăннă ĕçре сире малашне те ăнăçу, телей, интереслĕ уроксем, нумай пурăнма таса сывлăх сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: шкул администрацийĕ, пĕрле ĕçлекенсем, шкул ачисем.**

**Шутлă кунсем юлчĕç**

## Район хаçатне малалла çырăнтараççĕ

**Хаклă вулаканăм! «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2008 çулхи январь уйăхĕнчен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Район хаçатне 6 уйăха çырăнмалли хак – 169 тенкĕ те 62 пус.**

**Çитес çул та пĕрле пулар.**

**РАЙХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ.**